22-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ОКТЯБРЬ
24
ЮНКУН
206 (6957) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховнӑй Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаçачӗ

ГОСУДАРСТВӐНА ÇӖРУЛМИПЕ ПАХЧАÇИМӖÇ ПАМАЛЛИ ПЛАНА ХӐВӐРТ ТУЛТАРАР!

Хӗл кунӗсем кӑçал ир килсе çитрӗç. Çавна вара чылай районсемпе колхозсен руководителӗсем кӗтмен пулмалла. Ялхуçалӑх ӗçӗсене черетпе туса пыма ханӑхнӑ пирки, вӗсем малтан авӑн çапрӗç тата ытти ӗçсене туса пычӗç, çав вӑхӑтрах çӗрулмипе пахчаçимӗç пухса кӗртес ӗçсене кая хӑварса пычӗç. «Кашни çимӗçӗн хӑйӗн вӑхӑчӗ пур, вӑхӑт çитсен çӗрулмине те пухӑпӑр-ха», тесе вӗсем хӑйсене лӑплантарса ларнӑ майӗпе сисӗнмесӗрех вӑç хыççӑн вӑç, кун хыççӑн кун иртрӗ. Çапла ӗнтӗ халӗ çӗрулмипе пахчаçимӗçсем юр айне юлас хӑрушлах нумай колхозсем умне тухса тӑчӗ.

Апла пулин те çак хӑрушлӑха курман çынсем халӗ те ытлашшипех-ха. Районсенчи парти организацийӗсен хӑшпӗр руководителӗсем питех пӑшӑрханмаççӗ, çӗрулмипе пахчаçимӗççене кӗртсе пӗтерес, çак кунсенчех государствӑна çӗрулмипе пахчаçимӗç парса татас тесе, тивӗçлӗ мерӑсем йышӑнмаççӗ, çав ӗçсене çаплах хуллен, ытлашши васкамасӑр туса пыраççӗ. «Тен, ӑшӑтса пӑрахӗ-ха», тесе шутлаççӗ пулас çав юлташсем. Унсӑрӑн мӗнпе ӑнлантарса памалла-ха хӑшпӗр районсен уйхирӗсенче халӗ те кӑларман çӗрулми пуррине, вӗсене государствӑна парас ӗç нумай районсенче питӗ вӑрах пулса пынине?

Çӗрулмипе пахчаçимӗççене пухса кӗртес ӗç уйрӑмах Октябрьски, Куславкка, Сӗнтӗрвӑрри, Шупашкар, Канаш, Кувакино, Улатӑр, Çӗмӗрле районӗсенче начар пулса пычӗ. Малта пыракан хӑшпӗр районсем кӑна çӗрулмипе пухса кӗртсе пӗтернӗ. Юлса пыракан районсенчи колхозсенче çӗрулми хиртех юлас хӑрушлӑх пысӑк пулин те, юлашки пилӗк кун хушшинче вӗсем çӗрулми пухса кӗрес хӑвӑртлӑха ӳстермерӗç, хӑшпӗр çӗрте вӑл ӗçе пачах та чарса лартрӗç. Çӗрулмипе пахчаçимӗççене государствӑна леçсе парасси те çителӗксӗр пулса пырать. Ку енӗпе Улатӑр районӗ уйрӑмах юлса пырать: вӑл плана пурӗ те вунӑ процента яхӑн кӑна тултарнӑ. Пӑрачкав, Çӗмӗрле, Шӑмӑршӑ, Йӗпрес, Хӗрлӗ Чутай, Элӗк, Чкаловски, Елчӗк районӗсем те нумай мала кайман, вӗсем те плана 5—26 процент çеç тултарнӑ. Кувакино районӗ вара государствӑна çӗрулмипе пахчаçимӗçсем пама пачах та тытӑнман.

Кунта хатӗрлев организацийӗсем пирки те пӗр-ик сӑмах каласа хӑвармалла. Апат-çимӗç Халӑх Комиссариачӗ, эрех завочӗсен директорӗсем, Торгплодоовощь кантурӗ тата ыттисем те çӗрулми хатӗрлес ӗçе çителӗксӗр туса пыраççӗ. Сутуилӳ Халӑх Комиссариачӗпе Чӑвашпотребсоюз вара çак паха ӗçрен пачах пӑрӑннӑ. Çак организацисен руководителӗсем çӗрулми хӑй тӗллӗнех, нимӗн вӑй хумасӑрах килессе, çӗрулмипе пахчаçимӗçе вӗсене такам аякран илсе хатӗрлесе парасса кӗтеççӗ пулмалла. Апат-çимӗç Халӑх Комиссариачӗ, эрех тата крахмал завочӗсен директорӗсем хӑйсене çирӗплетнӗ районсенче вырӑнтах çӗрулми йышӑнмалли пунктсем уçма тивӗçлӗ пулнӑ, анчах вӗсем ВКП(б) Обкомӗпе Совнаркомӑн çак кӑтартӑвне халичченех пурнӑçа кӗртмен.

Сӳлте асӑннӑ çитменлӗхсем районсенчи партипе совет организацийӗсен тата хатӗрлев учрежденийӗсен руководителӗсем çӗрулмипе пахчаçимӗç хатӗрлес ӗçе тивӗçлипе хакламаннинчен килнӗ. Пирӗн çак ӗçе кирлӗ пек туса пыма пур условисем те пулнӑ. Колхозсен уйхирӗсенче кӑçал тухӑçлӑ çӗрулми ӳсрӗ, чылай вӑхӑт хушши çанталӑк лайӑх тӑчӗ. Çӗрулмипе пахчаçимӗççене пухса кӗртес тата государствӑна леçсе парас тесе, райкомсемпе райисполкомсем пӗтӗм вӑя хурса ӗçлени кӑна çитмерӗ. Сӑмахран, Чкаловски район тахçанах çӗрулми кӑларса пӗтернӗ пулсан, анчах государствӑна çӗрулми памалли плана 20 процент кӑна тултарнӑ пулсан, çакна вара çӗрулми çуккипе е вӑл «нӳррипе» мар, ӗçе организацилеме кирлӗ таран тӑрӑшманнипе ӑнлантарса памалла.

Çӗрулмипе пахчаçимӗçсем колхозниксемпе хулари ӗççыннисен хаклӑ апат-çимӗçӗ пулса тӑраççӗ. Нумай вӑй хурса ӳстернӗ çав çимӗççене пирӗн халех тата йӑлтах пухса кӗртмелле. Ку тӗлӗшпе халӗ иртсе пыракан кунсем татӑклӑ та хӗрӳллӗ кунсем пулса тӑмалла. Колхозсен мӗнпур вӑйӗсемпе майӗсене халӗ çӗрулмипе пахчаçимӗççене йӑлтах пухса кӗртсе пӗтерме мобилизацилемелле. Çакна май, ӗçлеме пултаракан кашни колхозникпа колхозницӑна, вӗсене çӗрулми мӗн чухлӗ тата хӑçан кӑларса пӗтермеллине кӑтартса, уйрӑм задани памалла, ӑна пурнӑçа мӗнле кӗртнине тӗрӗслесех тӑмалла.

Паянхи чи васкавлӑ ӗç вӑл—çӗрулмипе пахчаçимӗççене пухса кӗртесси, вӗсене государствӑна леçсе парасси. Çавӑнпа та вӑл ӗçе тума халӗ çынсем те, лашасем те çителӗклӗ таранах уйӑрса памалла, вӗсем çитмессӗ пулсан, колхозра тӑман çынсемпе хуласенчи тата район центрӗсенчи ӗççыннисене мобилизацилесе колхозсене ямалла.

Октябрь уйӑхӗ—государствӑна çӗрулмипе пахчаçимӗçсем памалли татӑклӑ уйӑх пулса тӑрать. Çак уйӑхра пирӗн колхозсен çӗрулмипе пахчаçимӗç памалли обязательствӑсене пӗтӗмпех пурнӑçламалла. Çак пысӑк задачӑна ӗçе кӗртес тесе, ВКП(б) райкомӗсемпе райисполкомсен хатӗрлев организацийӗсен нихӑçанхинчен те тимлӗрех ӗçлемелле: кашни колхоз кашни кунах хатӗрлев пунктне çӗрулмипе пахчаçимӗç турттартӑр, кашни районпа кашни колхоз хӑйӗн планне ноябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне тултартӑр. Ку вӑл—сӑмах мар, анчах колхозсенче кашнинчех çӗрулми турттаракан уйрӑм транспорт бригадисем тусан, вӗсене плана тултаричченех çав ӗçре ӗçлеттерсен, эпир государство умӗнчи хамӑрӑн парӑма вӑхӑтра парса татма пултаратпӑр.

Колхозниксемпе колхозницӑсен пурнӑçне малалла лайӑхлатас тесе, промышленноçри рабочисемпе работницӑсене тата хулари ытти ӗççыннисене çимӗçсем çителӗклӗ парса тӑрас тесе, тухӑçлӑ ӳснӗ çӗрулмипе пахчаçимӗççене йӑлтах пухса кӗртер, вӗсене хатӗрлев пунктне турттарас ӗçе татӑклӑнах вӑйлатар!

Октябрь уйӑхӗ—государствӑна тырӑ, çӗрулми, пахчаçимӗç парса татмалли тата авӑн çапса пӗтермелли уйӑх

РЕСПУБЛИКӐРА ГОСУДАРСТВӐНА ТЫРӐ ПАРАС ӖÇ ОКТЯБРӖН 20-мӗшӗ ТӖЛНЕ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырӑ панӑ
1. Вӑрнар	105.8
2. Муркаш	90.4
3. Етӗрне	90.3
4. Красноармейски	89.5
5. Сӗнтӗр	89.4
6. Çӗрпӳ	88.2
7. Советски	87.9
8. Чурачӑк	87.6
9. Элӗк	87.0
10. Шупашкар	86.1
11. Сӗнтӗрвӑрри	85.7
12. Шӑхасан	84.3
13. Калинино	82.0
14. Пӑрачкав	81.9
15. Вӑрмар	80.6
16. Елчӗк	79.6
17. Куславкка	76.7
18. Октябрьски	75.8
19. Йӗпрес	75.1
20. Канаш	73.6
21. Первомайски	72.8
22. Комсомольски	72.8
23. Ишлей	72.4
24. Чкаловски	70.0
25. Улатӑр	69.9
26. Хӗрлӗ Чутай	66.5
27. Çӗмӗрле	63.4
28. Тӑвай	63.2
29. Шӑмӑршӑ	58.4
30. Кувакино	44.7

18 колхоз государствӑна тырӑ парса татнӑ

Элӗк районӗнчи колхозсем, Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, государствӑна тырӑ парас ӗçе чылай хӑвӑртлатрӗç. 86 колхозран 18-шӗ государствӑна тырӑ парса татнӑ.

Анчах та хӑшпӗр колхозсем тунӑ çитӗнӳсемпе лӑпланса ларассӗ-ха. Элекеушкӑнь ял Советӗнчи колхозсем халиччен малта пынӑ пулсан, октябрь уйӑхӗ пуçланнӑранпа вара хатӗрлев пунктне пӗр пентнер та тырӑ леçмен. Çавӑн пекех «Трнер» колхоз та юлса пырать. «Красная звезда» колхоз юлашки 18 кун хушшинче 60 пентнер. Чӑваш Сурӑм ял Советӗнчи колхозсем 1 975 пентнер леçес вырӑнне 516 пентнер çеç леçнӗ. Ураскилт ял Советӗнчи колхозсем (ял Совет председателӗ Калмыков) государствӑна тырӑ леçес тӗлӗшпе плана 56 процент çеç тултарнӑ.

ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗн çак юлашки кунсенче государствӑна тырӑ парса татас тӗлӗшпе кирлӗ мерӑсем йышӑнмалла. **Ф. КАТЕЕВ.**

ПЛАНА ЫТЛАШШИПЕХ ТУЛТАРНӐ

Вӑрмар МТС-ӗ тракторсемпе тумалли çулталӑкри ӗç планне 120 процента яхӑн тултарнӑ. Лукин юлташ ертсе пыракан 9-мӗш трактор бригади хӑйӗн планне 187 процент, 7-мӗш бригада (бригадирӗ В. Григорьев юлташ) 162% тултарнӑ.

МТС кӑçал комбайнсемпе тырӑ вырса пухмалли плана ытлашшипех тултарчӗ. Комбайнер И. Александров юлташ 110 гектар вырӑнне 187 гектар вырса пухнӑ, 133 килограмм горючи перекетленӗ. Комбайнер С. Картинов 262 гектар, М. Андреев комбайнер 170 гектар вырса пухнӑ.

МТС машиновечӗсем халӗ колхозсенче авӑн çапаççӗ. Авӑн çапас ӗçре Н. Иванов, Н. Петров, И. Владимиров машиноведсем лайӑх ӗçлеççӗ. Н. Иванов машиноведӑн планпа 260 тонна авӑн çапмалла, вӑл 360 тонна çапнӑ. Н. Семенов машиновед «БДО-34» молотилкӑпа 285 тонна çапнӑ.

Халӗ МТС-ра тракторсене тӗрӗслеççӗ, вӗсене юсама хатӗрленеççӗ.

РАБОЧИСЕМ КОЛХОЗСЕНЕ ПУЛӐШАÇÇӖ

Çӗмӗрлери комбинат, «Большевик», комбайн деталӗсем тӑвакан заводсенчи рабочисем кӑçал нумай колхозсене тырӑ вырма пулӑшрӗç. Хулари заводсемпе тӗрлӗ артельсенчен 450 çын колхозсене кайса çӗрулми пуçтарса кӗртме пулӑшнӑ. Ленин ячӗпе тӑракан колхозра комбинатран 120 çын ӗçленӗ.

Пулӑшма пынӑ рабочисем валли колхозсем столовӑйсем уçнӑ тата ӗçлесе илнӗ çӗрулмине хулана леçме лавсем панӑ. **Ан. ТАНЬКОВ.**

РЕСПУБЛИКӐРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ АВӐН ÇАПАС ӖÇ ОКТЯБРӖН 20-мӗшӗ ТӖЛНЕ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авӑн çапнӑ
1. Шӑмӑршӑ	92.5
2. Çӗрпӳ	83.1
3. Октябрьски	82.6
4. Шупашкар	82.5
5. Элӗк	80.9
6. Йӗпрес	80.7
7. Куславкка	80.5
8. Красноармейски	80.3
9. Вӑрнар	80.1
10. Калинино	79.7
11. Комсомольски	79.7
12. Первомайски	79.0
13. Вӑрмар	77.9
14. Елчӗк	77.7
15. Чкаловски	77.5
16. Ишлей	76.8
17. Тӑвай	76.8
18. Чурачӑк	76.5
19. Канаш	76.5
20. Сӗнтӗр	76.0
21. Шӑхасан	74.6
22. Хӗрлӗ Чутай	74.1
23. Кувакино	73.4
24. Муркаш	72.8
25. Улатӑр	71.2
26. Сӗнтӗрвӑрри	69.7
27. Çӗмӗрле	69.6
28. Советски	66.8
29. Пӑрачкав	62.9
30. Етӗрне	60.6

„Ӗмӗт" колхоз ялхуçалӑх çулне вӗçлерӗ

Çӗрпӳ районӗнчи «Ӗмӗт» колхоз тырпула пухса кӗртме лайӑх хатӗрленсе тухрӗ. Колхоз тырпула пухса кӗме çирӗп план туса, вӑл плана колхозри кашни бригадӑра тӗплӗн сӳтсе-явнӑ. Çавна май кашни колхозник хӑçан ӑçта ӗçлемеллине лайӑх пӗлсе тӑнӑ. Пур ӗçе те уйрӑм сдельщинӑпа организацилленине пула, колхозӑн ӗç планӗ яланах срокчен пурнӑçланса пынӑ. Колхоз тырӑ вырма тухсан виçӗ кунтан авӑн çапма тытӑннӑ. Молотилка тухӑçне ӳстерес шутпа, икӗ лаша вырӑнне 4 лаша кӳлнӗ. Иванов тата Васильев комсомолецсем машиноведсем пулса пӗр-пӗринпе улӑшса ӗçленӗ. Колхоз октябрӗн 5-мӗшӗ тӗлне районра чӑн малтан авӑн çапса пӗтерчӗ.

Колхоз государство умӗнчи хӑйӗн обязательствине чыслӑн пурнӑçласа пычӗ. Государсатвӑна сентябрь уйӑхӗнчех тырӑ парса татрӗ. Планран ирттерсе Хӗрлӗ Çар фондне 400 пӑт тырӑ пачӗ. Колхозран хатӗрлев пунктне тырӑ леçекен бригадӑра Петрова юлташ тимлӗн ӗçлерӗ. Вӑл час-часах кунне икшер хутларӗ. Колхоз государствӑна çӗрулмипе пахчаçимӗç те парса татнӑ. Халӗ колхозӑн государство умӗнче нимӗнле парӑм та çук. Аш-какай çӑм çитес çулшӑн та парса хунӑ.

Кунта килес çулхи тырпул тухӑçӗшӗн те кӑçалах кӗрешеççӗ. Кӗрхи тырра пӗтӗмпех ретӗн-ретӗн машинӑпа акнӑ. Колхоз октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне кӗрхи çӗртме тумалли плана тултарнӑ. Çӗртме сухин пахалӑхӗ лайӑх. Килес çула валли вӑрлӑх çителӗклӗ уйӑрнӑ. Вӑрлӑх участокӗсенчен пухса илнӗ тырра уйрӑмӑн çапса, лайӑх дезинфекциленӗ амбарсене хунӑ.

«Ӗмӗт» колхоз выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе малта пырать. Кунта выльӑх-чӗрлӗх валли ӑшӑ та çутӑ витесем, çителӗклӗ таран апат хатӗрленӗ. Ӗне, сурӑх, пӑру тата сысна витисене тул енчен тӑмпа сӗрнӗ, шал енчен шуратса хунӑ. Витесенче йӗркелӗх тата тасалӑх мӗнлине кашни эрнерех правлени членӗсем тӗрӗслесе тӑраççӗ.

Колхоз ялхуçалӑх çулне вӗçлерӗ. Халӗ кунта колхоза кирлӗ фондсене валли тырпул, выльӑх апачӗ уйӑраççӗ. **А. ИВАНОВ.**

Суйлавсем ирттерме хатӗрленеççӗ

ВӐРНАР. Районра СССР Верховнӑй Советне суйламалли Положение вӗренес ӗç анлӑн сарӑлса пырать. ВКП(б) райкомӗн парткабинечӗ çумӗнче суйлава хатӗрленес ӗçе пулӑшма ятарласа выставка организациленӗ. Выставкӑна государствӑн чи аслӑ органне суйлассипе çинчен калакан литература пухнӑ. Районри колхозсенче суйлав законне вӗренме тытӑнаççӗ.

Октябрӗн 19-мӗшӗнче районра ВКП(б) пуçламӗш организацийӗсен секретарӗсемпе агитколлектив руководителӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Районри канашлу хыççӑн, агитколлектив руководителӗсем колхозсенче агитаторсемпе канашлусем туса ирттерсе, «Положени» çинчен ӑнлантарса пама рабочисем пурӑнакан бараксем çумне тата колхозсенче кашни 5 кил çумне агитаторсене çирӗплетсе тухнӑ.

«Гигант» колхозра çак ӗçе вулав сурчӗн заведующийӗ Н. Кириллов юлташ ертсе пырать. Колхозниксем кунта кашни каçах ӗç пӗтнӗ хыççӑн вулав суртне пухӑнаççӗ, Кириллов юлташ вӗсене суйлав законне ӑнлантарса парать, колхозниксен ыйтӑвӗсем çине ответлет.

Лесхозра (парторганизаци секретарӗ Шегуров) агитаторсен семинарне туса ирттернӗ, кунта та агитаторсем ӗçе тытӑннӑ.

Фосфорит завочӗ умӗнчи пуçламӗш парторганизаци (секретарӗ Дубровский юлташ) рабочисем хушшинче суйлав Положенине ӑнлантарса пама агитаторсене бараксем çумне çирӗплетнӗ.

Октябрӗн 22-мӗшӗнче ял Совет председателӗсемпе секретарӗсен районри канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура Верховнӑй Совет суйлавӗсене хатӗрленесси çинчен сӳтсе-яврӗç. **Е. ВОЛКОВ.**

Суйлав законӗпе кашни ӗççыннине паллаштарасшӑн

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ, октябрӗн 23-мӗшӗ. (Телефонпа). Çак кунсенче Хӗрлӗ Чутайри вӑтам шкулти агитколлектив «СССР Верховнӑй Советне суйламалли Положение» вӗренес ыйтӑва сӳтсе-яврӗ. Агитколлектив руководителӗ Яштайкин юлташ агитаторсене «Положенин» кашни сыпӑкӗпе тата статьипе тӗплӗн паллаштарчӗ. Халӗ агитаторсем «Положение» колхозниксене ӑнлантарса парас тӗлӗшпе хӗрӳллӗн ӗçлеççӗ. «Профинтерн» колхозра ку тӗлӗшпе Мария Майоровӑпа София Майоровская комсомолкӑсем лайӑх ӗçлеççӗ. «Красный Четай» колхозра занятисене Матвей Фадеев ирттерет. Вӗсем колхозниксене «Положенин» кашни статьине тӗплӗн ӑнлантарса параççӗ.

Атнар, Уйпуç, Пантӑк ял Совечӗсенчи агитколлективсем те «Положение» вӗренес тӗлӗшпе канашлу ирттернӗ. Асӑннӑ ял Совечӗсенче «Положение» ӗççыннисене ӑнлантарас ӗç вӑйлансах пырать.

П. ТИХОНОВ,
ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.

Уяв умӗнхи çӗнтерӳ

ÇӖМӖРЛЕ, октябрӗн 23-мӗшӗ. (Телефонпа). Комбайнсем валли детальсем туса кӑларакан завод коллективӗ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революцин 28 çул тултарнӑ уява пысӑк çитӗнӳсемпе кӗтсе илме хатӗрленет. Ку тӗлӗшпе завод коллективӗ октябрь уйӑхӗнчи производство планне 120 процента çити, декабрьти плана декабрӗн 20-мӗшӗ тӗлне тултарма тата çулталӑкри производство планне декабрӗн 25-мӗшӗ тӗлне тултарма обязательство илчӗ. Кунсӑр пуçне, завод туса кӑларакан продукци хакне 5 процента çити чакарма, электроэнергие 10 процента çити перекетлеме пулчӗ. Халӗ çак обязательствӑсене пурнӑçлассишӗн заводра социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарӑлса кайрӗ.

Районри ытти предприятисемпе артельсем те уяв умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, пысӑк çӗкленӳпе ӗçлеççӗ. Акӑ, Тури Кӑмашри «Обод» артель коллективӗ 9 уйӑх хушшинчи производство планне срокчен пурнӑçланӑшӑн райисполкомпа ВКП(б) райкомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗçлӗ пулчӗ. Халӗ артель коллективӗ уява кӗтсе илнӗ май çӗнӗ обязательствӑсем илчӗ. **И. СОРОКИН.**

Вырӑнти промышленность ӗçне лайӑхлатмалла

КӲКЕÇ. (Телефонпа). Районри промышленность предприятийӗсемпе артельсем 9 уйӑх хушшинче çителӗксӗр ӗçлерӗç. «Правда» промартель коллективӗ 9 уйӑх хушшинчи производство планне пурӗ те 50 процент кӑна тултарнӑ. «Большевик» промартель вара юлашки 2 уйӑх хушшинче продукци пачах туса кӑларман. Ытти артельсенче те ӗçсем çакӑн майлах. Ку вӑл, паллах, хуçалӑх руководителӗсем çителӗксӗр ӗçленинчен килет. Рабочисем хушшинче ӗç дисциплини япӑх, чертаварсем çителӗксӗр, кадрсем те çителӗклӗ мар. Çавна пула кунта урапа-çуна, савӑт-сапа, кирпӗчпе черепица тата ыттисене те пачах туса кӑларма пӑрахнӑ. **Г. ПЕТРОВ.**

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

СССР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Тӗп суйлав комиссийӗн составне çирӗплетесси çинчен

«СССР Верховнӑй Советне суйламалли Положенин» 36-мӗшпе 37-мӗш статьисенче каланӑ тӑрӑх, СССР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Тӗп суйлав комиссийӗн составне çак общественнӑй организацисемпе ӗççыннисен обществисен представителӗсене кӗртсе çирӗплетес:

Тӗп суйлав комиссийӗн председателӗ Василий Васильевич **Кузнецов**—Пӗтӗм Союзри профсоюзсен Центральнӑй Советӗнчен.

Тӗп суйлав комиссийӗн председателӗн заместителӗ Николай Григорьевич **Бруевич**—Аслӑ шкулсемпе наука учрежденийӗсен работникӗсен профсоюзӗнчен.

Тӗп суйлав комиссийӗн секретарӗ Николай Николаевич **Шатилин**—Политикӑпа çутӗç учрежденийӗсен работникӗсен профсоюзӗнчен.

Тӗп суйлав комиссийӗн членӗсем:

Георгий Михайлович **Попов**—Мускаври коммунистсен организацийӗнчен,

Алексей Александрович **Кузнецов**—Ленинградри коммунистсен организацийӗнчен,

Клавдия Анисовна **Абушенко**—Белорус ССР-ӗнчи совхозсен рабочийӗсемпе служащийӗсен профсоюзӗнчен.

Николай Семенович **Тихонов**—Совет писателӗсен союзӗнчен,

Николай Александрович **Михайлов**—Пӗтӗм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗнчен,

Александр Иванович **Покрышкин**—СССР Оборонине тата авиаципе химистроительствине пулӑшакан обществӑн (Осоавиахимӑн) Центральнӑй Советӗнчен,

Нина Андреевна **Пылаева**—Калинин облаçӗнчи «Красный путиловец» колхозри колхозниксенчен,

Зиновий Тимофеевич **Сердюк**—Киеври коммунистсен организацийӗнчен,

Ферапонт Петрович **Головатый**—Саратов облаçӗнчи «Стахановец» колхозри колхозниксенчен.

Таисия Ивановна **Шувандина**—Иваново хулинчи Федор Зиновьев рабочи ячӗпе тӑракан пир-авӑр фабрикинчи рабочисенчен тата служащисемпе инженерсенчен,

Алексей Леонтьевич **Шатилин**—Магнитогорскри Сталин ячӗпе тӑракан металлурги комбинатӗнчи рабочисенчен тата служащисемпе инженерсенчен.

Усман **Юсупов**—Узбекистанри коммунистсен организацийӗнчен.

СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав Кремль. 1945 çулхи октябрӗн 20-мӗшӗ.

В. М. Молотов Чехословакин послоне Горак господина йышӑнни

Октябрӗн 22-мӗшӗнче СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов Чехословакин республикин Совет Союзӗнчи Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй послне Ю. Горак господина йышӑннӑ. Ку йышӑну—Ю. Горак господин хӑйӗн верительнӑй грамотисене СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председательне парас умӗн пулса иртнӗ йышӑну пулнӑ.

Совет çӗршывӗ тӑрӑх

ПОЛЯРНИКСЕМ ВАЛЛИ УЯВ УМӖНХИ РАДИОПЕРЕДАЧА

Çурçӗрти Тинӗç çулӗн главнӑй управленийӗ тата Пӗтӗм Союзри радиокомитет полярниксене валли Мускавран радиопередачӑсем пама йышӑннӑ. Çавӑн пек передачӑсене пама вӑрçӑ вӑхӑтӗнче чарнӑ пулнӑ. Малтанхи передачӑна Октябрьти аслӑ революци 28 çул тултарнӑ ятпа туса ирттереççӗ. Микрофон умне столицӑра И. Д. Папанин контр-адмирал тата полярниксен тӑванӗсем тухаççӗ. (ТАСС).

КОЛХОЗСЕН УЙӐРАЛМИ ФОНЧӖСЕМ ӲССЕ ПЫРАÇÇӖ

Ворошиловград облаçӗнчи колхозсем, хӑйсен хуçалӑхне юсаса ура çине тӑратнӑ вӑхӑтрах, колхозсен уйӑралми фондне, вӑрçӑччен хипе танлаштарсан, 3,5 хут ытла ӳстернӗ. Кӑçалхи 9 уйӑх хушшинче облаçри колхозсем çӗнӗ строительствӑна тума, обществӑллӑ çуртйӗрсене юсама тата выльӑх-чӗрлӗх илме 5 миллион тенке яхӑн тӑкакланӑ. (ТАСС).

ПОЛЯР УНКИ ЛЕШ ЕНЧИ ВАТӐ СУНАРÇӐ

НАРЬЯН-МАР, октябрӗн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Тундрӑра горностай, пакша тата мулкач тытмалли сезон пуçланнӑ. Сунара темиçе çӗр сунарçӑ тухса кайнӑ.

Филипп Яковлевич Филиппов çур ӗмӗр хушши ӗнтӗ сунара çӳрет. Малтанхи 40 çул хушшинче вӑл Коми вӑрманӗсенче сунара çӳренӗ, кайран вара Поляр унки леш енне куçса кайнӑ.

Сунарçӑсен Пӗтӗм Союзри ӑмӑртӑвӗнче Филиппов малти вырӑна тухнӑ. Кӑçал сунара тухас умӗн ӑна, çамал йытӑ тата атӑ преми панӑ.

Ватӑ сунарçӑ 50 çул хушшинче пӗтӗмпе 45 700 кайӑк тытнӑ. Вӑл шута 1 900 тилӗ, 800 песец, 2 900 горностай, 25,000 пакша тата ытти тӗрлӗ кайӑксем те кӗреççӗ.

Ӳкерчӗк çинче: Харьков облаçӗнчи Будянскри фаянс заводӗнче Н. М. Нескрыпта (сулахайри) тата Л. Е. Шамаева стахановкӑсем завод тунӑ савӑт-сапана пӑхаççӗ.
Л. ЛЕОНИДОВ фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

УРАЛТИ ГОРЬКИЙ ЯЧӖПЕ ТӐРАКАН ГОСУДАРСТВО УНИВЕРСИТЕЧӖ 25 ÇУЛ ТУЛТАРНИ

СВЕРДЛОВСК, октябрӗн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Уралти А. М. Горький ячӗпе тӑракан государство университетне уçни 25 çул тултарчӗ. Университета 1920 çулхи октябрӗн 19-мӗшӗнче Совнаркомӑн В. И. Ленин алӑ пуса çирӗплетнӗ декречӗ тӑрӑх уçнӑ. Ана уçас тӗлӗшпе А. А. Андреев, А. М. Горький, А. В. Луначарский, А. Е. Ферсман академик хутшӑнса ӗçленӗ.

Чӗрӗк ӗмӗр хушшинче университет квалификациллӗ пиншер специалист — геологсем, химиксем, историксем тата ыттисене те вӗрентсе хатӗрленӗ.

Суйлав кампанийӗнче авиаципе усӑ курни

СССР Верховнӑй Советне суйламалли кампани вӑхӑтӗнче гражданла сывлӑш флотне пысӑк задача панӑ. Сывлӑш флочӗн инçетри суйлав округӗсене литература тата суйлав материалӗсем леçсе памалла.

Çак ӗçе тумашкӑн çурçӗрте нумай вӑхӑт ӗçленӗ опытлӑ летчиксене суйласа илнӗ. Суйлав кампанийӗнче усӑ курма уйӑрнӑ самолетсене халӗ тӗплӗн тӗрӗслеççӗ.

Уралти, Хӗвеланӑç Çӗпӗрти, Хӗвелтухӑç Çӗпӗрти, Инçет-Хӗвелтухӑçӗнчи тата Çурçӗрти управленисенче çак ӗçе тума специальнӑй авиаотрядсем тунӑ. Гражданла сывлӑш флочӗн авиаци групписенче инструкторсем уйӑрнӑ. Вӗсем вырӑнти советсемпе пӗрле суйлав материалӗсене турттарса çӳрессине организацилемелле.

Гражданла сывлӑш флочӗн управленийӗ, авиаотрядсемпе звеносен командирӗсем союзлӑ республикӑсен Совнаркомӗсемпе тата облисполкомсемпе пӗрле суйлав кампанинче ӗçлемелли плана туса хатӗрлеççӗ. Çав плансенче ӑçтан вӗççе каймаллине, мӗн чухлӗ пассажирсемпе грузсем илсе каймаллине, анса лармалли пунктсене палӑртмалла.

Гражданла сывлӑш флочӗн отрячӗсем халӗ суйлав кампанинче ӗçлеме хатӗрленме тытӑннӑ та. Уралти управлени суйлав кампанийӗнче ӗçлеме чи лайӑх пилотсене уйӑрнӑ. Инçетри суйлав округӗсенче самолетсене анса лармалли площадкӑсем тунӑ. Молотов хулинчен Кудымкара пӗрремӗш самолет суйлав материалӗсене илсе кайнӑ.

Суйлав литературине самолетсемпе Анадыре Якутска, Салехарда Нарьян-Мара тата ытти вырӑнсене те илсе пынӑ.

Авиаци маршалӗ Ф. А. Астахов приказӗ тӑрӑх гражданла сывлӑш флочӗн главнӑй управленийӗнче суйлав кампанийӗнче авиаципе усӑ курас ӗçе ертсе пыма оперативнӑй группа тунӑ. (ТАСС).

Суйлав законĕ çинчен пĕлсе тăма

1. Мĕн вăл пурне те тивĕç суйлав?

Совет халăхĕ государствăн чи аслă органне—СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет. Предприятисемпе учреждениссенче, колхозсемпе совхозсенче, килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче—пур çĕрте те агитаторсем Сталинла Конституцин аслă принципĕсем çинче никĕсленсе тăракан суйлав законне ăнлантарса параççĕ.

СССР Верховный Советне суйламалли Положенин статьисем социализмлă демократин—тĕнчери чи аслă демократин паллисене уççăнах кăтартса пара ççĕ. «Положенин» пĕрремĕш статьинчех, СССР Верховный Совечĕн депутачĕсене суйлавçăсем пурне те тивĕç, пĕртан тата тÿрех суйламалли правăпа вăрттăн сасăласа суйлаççĕ, тенĕ. Çакă ĕнтĕ вăл совет демократийĕн никĕсне уççăнах палăртса панине пĕлтерет.

СССР Конституцийĕн 135-мĕш статьи тăрăх, суйлав Положенийĕнче суйлавсем пурне те тивĕç пулни çинчен каланă. Вăл акă мĕне пĕлтерет: совет государствинче 18 çула çитнĕ пур граждансем те, вĕсем мĕнле расса е наци çыннисем пулнине, арçын е хĕрарăм пулнине, мĕнле тĕне тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине, мĕнле социальнăй сийрен тухнине, пурлăх тĕлĕшĕнчен епле пулнине тата ĕлĕк мĕн ĕçпе пурăннине пăхмасăр, пурте суйлава хутшăнма пултараççĕ. Асран тухнă çынсемпе судпа айăпласа суйлав прависĕр хăварнă çынсем кăна суйлава хутшăнма пултараймаççĕ.

Совет çĕршывĕнчи пек пурне те тивĕç суйлав пĕтĕм тĕнчипе те урăх ниçта та çук. Буржуаллă государствăсенче, вăл шутра «демократиллĕ» çĕршывсенче те, ĕççыннисене суйлава хутшăнассинчен пăрса хăварма тĕрлĕ майсем пур. Буржуаллă чылай çĕршывсенче, сăмахран, Швейцарире, хĕрарăмсене суйлав прави паман. Пур çĕрте тенĕ пек 21 çула çитмесĕр çамрăксене суйлав прави памаççĕ. Капитализмла чылай çĕршывсенче суйлав прави илес тесен, пĕр вăхăт хушши—калăпăр, пĕр çул хушши—пĕр-пĕр суйлав округне кĕрекен вырăнта пурăнмалла. Çавна пула ĕççĕр юлнă рабочисем, ĕç шыраса пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçса çÿресе, суйлав прависĕр тăрса юлаççĕ.

Патша правительстви те государство Думине суйланă чухне, тĕрлĕ майсемпе усă курса, миллионшар çынсене суйлав прависĕр тăратса хăварнă. Хĕрарăмсене пурне те, урăхла каласан, халăхăн çур пайне, киргизсемпе якутсене, 25 çула çитмен çамрăксене суйлав прави паман. Хресченсенчен килхуçисем кăна—92 миллион хресченрен 14 миллион кăна—суйлав правипе усă курнă. Миллионшар рабочисене суйлава хутшăнма ирĕк паман.

Совет Союзĕнче кашни гражданин суйлав правипе туллин усă курать. Пирĕн суйлав законĕ кашни гражданин хăйĕн суйлав правипе анлăн усă курма пултартăр, тесе тăрăшать. Суйлавçăсен списокĕсене суйлавсем иртиччен пĕр уйăх маларах пурне те курăнмалла çĕре кăларса çакаççĕ. Кашни суйлавçă, списокра пĕр-пĕр йăнăш курсан, ун çинчен ĕççынни депутачĕсен Совечĕн исполкомне заявлени пама пултарать. Суйлав списокĕсене туса хатĕрленĕ хыççăн суйлавçă урăх вырăна куçса каять пулсан, ĕççынни депутачĕсен Совечĕн исполкомĕ ăна кирек ăçта та сасăлама ирĕк паракан удостоверени парса ярать.

Çапла вара Сталинла Конституципе çирĕплетсе хăварнă пурне те тивĕç суйлавсем пирĕн суйлав законĕнче питĕ уççăн паларса тăраççĕ. 1937 çулта СССР Верховный Советне суйлас ĕçе совет халăхĕ пĕр çын пек пулса хутшăнни те çакна уççăнах кăтартса парать. Ун чухне 91 миллион суйлавçă, урăхла каласан, суйлавçăсенчен 96,8 процентĕ СССР Верховный Советне суйлас ĕçе хутшăнчĕ. Совет Союзĕн граждансем суйлав участокĕсене туллин кăмăлпа, саванса пычĕç. Аслă Сталин юлташ ертсе пынипе кĕрешсе илнĕ аслă правасемшĕн совет халăхĕ большевиксен партине чун-чĕререн тав турĕ.

СССР Верховный Советне эпир Отечественнăй аслă вăрçă çĕнтерÿпе пĕтнĕ хыççăн, пирĕн социализмла демократи Германи фашизмне аркатса тăкнă хыççăн суйлатпăр. СССР Конституцийĕ, Сталин юлташ каланă тăрăх, «фашизма айăплакан, социализмпа демократие никам та çĕнтерме пултарайманни çинчен калакан акт» пулса тăрать.

Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕр

Калинино районĕнчи чылай колхозсем обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ăшă тата тутă хĕл каçарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Выльăх витисене мăкласа-ăшăтса хатĕрлерĕç, кирлĕ чухлĕ выльăх апачĕ хатĕрлесе хучĕç.

Уйкас Юнтапари «Новая жизнь» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур выльăхсем енĕпе те тултарчĕ. Выльăхсене хĕл каçарма кирлĕ çуртйĕрсене пурне те юсаса, мăкласа çитерчĕ. Урайсене юсанă, 200 тонна утă тата ытти тĕрлĕ выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлеме работниксене пурне те тупса çирĕплетнĕ. Çавăн пекех обществăллă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма «Красная звезда», «Çĕньял», Суворов ячĕпе тăракан колхозсем те аван хатĕрленсе çитнĕ. Кивçурт Мăратри «Красная звезда» колхозра 40 лаша, 20 сысна вырнаçмалăх çĕнĕ витесем туса пĕтернĕ. Выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Çав вăхăтрах выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарас тĕлĕшпе япăх ĕçлекен колхозсем те пур-ха. Акă, Кушар Юнтапари Кагановнч ячĕпе тăракан колхозра обществăллă выльăх-чĕрлĕх çине çиелтен кăна пăхаççĕ. Колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана çулран-çулах тултармаççĕ. Халĕ те 24 ĕне-выльăх, 45 сысна, 20 сурăх çитмест. Çамрăк выльăхсем туянас тĕлĕшпе колхоз председателĕ Ф. Кулагин юлташ нимĕн те тумасть.

Выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене те çиелтен кăна юсанă. М. Иванов юлташ аслă конюх пулса ĕçлекен витере шăтăксене питĕрмен, чÿречесем ванчăк.

Ферма витине пĕтĕмпех махорка çакса тултарнă. Çавна пула колхоз ĕнисем сивĕ вăхăтра та ирĕкрех выртаççĕ. Вĕсене сыхлакансем те çук. Нумаях пулмасть 3 хура кашкăр тытса кайнă. Пушар хуралĕнчи лашан тÿртне йĕнерчĕкпе шăйăрса юрăхсăра кăларнă. Кулагин юлташ çакăн пек йĕркесĕрлĕхсене курать, анчах айăплă çынсене ответ тыттарас пирки нимĕн те тумасть.

Фермăра 70 сысна, 50 ĕне валли çуртйĕр çук. Çĕнĕрен çуртсем тума тăрăшмаççĕ. Вăрçăччен тума пуçланă витене халĕ те туса пĕтермен.

Е. ВОРОБЬЕВ.

ВЛКСМ ОБКОМĔНЧЕ

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, октябрĕн 28-мĕшĕнче ача çурчĕсене пулăшу пама комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ пулса иртмелле. ВЛКСМ Шупашкар хула комитетне, Улатăр, Йĕпреç, Ишлей, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри, Комсомольски, Пăрачкав, Октябрьски, Шăмăршă, Çĕрпÿ, Етĕрне райкомĕсене çав воскресника вăхăтра хатĕрленме, вăл ĕçе пĕтĕм районри комсомолецсемпе çамрăксене хутшăнтарма хушнă.

Воскресник вăхăтĕнче вутă хатĕрлесе ача çурчĕсене вутă турттарса памалла, çуртйĕрсене юсаса ăшăтмалла, кĕпе-тумтирпе атă-пушмак тавраш не юсаса памалла, вечерсемпе концертсем туса иртсе ача çурчĕсене пулăшма укçа-тенкĕ пухмалла.

Ремесла училищисемпе чугунçул училищисене тата ФЗО шкулĕсене вĕренме илеççĕ

Сентябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 15-мĕшне çитиччен хула çамрăксене ремесла училищисене тата ФЗО шкулĕсене вĕренме илчĕç. Çак вăхăт хушшинче пирĕн республикăра пурĕ 515 ачана вĕренме илнĕ. Ремесла училищисемпе ФЗО шкулĕсене вĕренме илес ĕç уйрăмах Канаш, Шупашкар тата Çĕмĕрле хулисенче лайăх иртрĕ. Канаш хули 100 ача, Шупашкарпа Çĕмĕрле хулисем кашниех 50-шар ача вĕренме илнĕ. Шупашкар хулинчи Виталий Милютин, Петр Капитонов, Мария Сперанская, Галина Карнюкова, Василий Соловьев, Анатолий Панкратов тата ыттисем те, пурĕ 8 ача, шкула вĕренме кĕме хăйсен ирĕкĕпе заявлени панă.

Çак шкулсене октябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 15-мĕшĕччен ялти çамрăксене вĕренме илеççĕ. Халĕ ку ĕç республикăра пысăк хăвăртлăхпа пырать. Октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне республикăра пурĕ 800 ача вĕренме илнĕ. Анчах та ялти çамрăксене шкула вĕренме илес тĕлĕшпе Улатăрпа Кувакино районĕсем па чах та ĕçлеме тытăнман.

ÇĔНĔ ЭКСПОНАТСЕМ

Художество галлерейи хăйĕн фончĕсене ÿстерес шутпа Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пулнă выставкăран чылай çĕнĕ экспонатсем илнĕ. Вăл шутра—М. Спиридоновăн, Н. Сверчковăн, Каменшиковăн, Фроловăн, Даниловăн тата Григорьевăн çĕнĕ картинисем пур.

Хаçатра пичетленсе тухнă материалсем тăрăх

„Ватă лаша опычĕ"

Сентябрĕн 22-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатра çакăн пек пĕчĕк фельетон пичетленсе тухнăччĕ. Вăл фельетонра Куславкка районĕнчи Андреев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Глебов колхозăн çамрăк лашисене ватă лашасемпе улăштарса хăйне валли услам туни çинчен тата колхоз лашисемпе тискерле усă курни çинчен çырнăччĕ.

ВКП(б) Куславкка райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Орлов юлташ пĕлтернĕ тăрăх, çак фельетонра çырнă фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулнă. Çав ситменлĕхсемшĕн Андреев ячĕпе тăракан колхоз председательне Глебова ĕçрен кăларнă тата хупса лартнă, ĕçне çак кунсенчех халăх судĕнче пăхса тухаççĕ.

Карачри Ялпо председательне Александрова та ĕçрен кăларнă, ответ тыттарас майпа унăн ĕçне те пăхса тухма суда панă.

Монголи Халăх Республикинчи плебисцит

УЛАН-БАТОР, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 18-мĕшĕнче Улан-Батор хулине Монголи Халăх Республикинче пулмалли плебисцита асăрхаса тăма Китай представителĕ—Китай республикин шалти ĕçсен вице-министрĕ Лей-Фа-чжан килнĕ, унпа пĕрле ытти çынсем те килнĕ. Октябрĕн 19-мĕшĕнче Лей Фа-чжан Совет Союзĕн Монголи Халăх Республикинчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ Иванов юлташ патне пырса кайнă. Ун хыççăн Китай вице-министрне Лей Фа-чжана Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Чойбалсан маршал йышăннă.

САСĂЛАНИН МАЛТАНХИ ИТОГĔСЕМ

УЛАН-БАТОР, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 22-мĕшĕнче Монголи Халăх Республикинчи плебисцита иртерес тĕлĕшпе ĕçлекен тĕп комисси пурте сасăланин малтанхи итогĕсене пĕлтернĕ. Плебисцит Монголи Халăх Республикин никама пăхăнманлăхĕ пирки пулса иртнĕ, вăл 1945 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнче пулнă.

Плебисцита иртерес тĕлĕшпе ĕçлекен тĕп комиссин председателĕн заместителĕ Цурунжаб ТАСС корреспондентне çапла каланă:

«Плебисцит Монголи Халăх Республики хăйне уйрăм государство пулса никама пăхăнмасăр пурăнас ыйтупа пулса иртрĕ. Пирĕн Конституцире каланă пек, плебисцита Монголи Халăх Республикин 18 çула çитнĕ граждансем арçынне-хĕрарăмне, мĕнле тĕн тытса пурăннине тата мĕнле халăх çынни пулнине пăхмасăрах, пурте хутшăнчĕç. Аймаксенчи (облаçсенчи) комиссисем тунă списоксенче кăтартнă тăрăх, пĕтĕмпе республикăра 494.070 çын сасăламалла пулнă. Октябрĕн 22-мĕшĕччен пуханнă даннăйсем тăрăх, мĕнпур 18 аймакра Монголи Халăх Республикине хăйне уйрăм государство пулса никама пăхăнмасăр пурăнтарассишĕн 483.291 çын сасăланă, вăл 97,8 процент пулать. Монголи Халăх Республикин никама пăхăнманлăхне хирĕç пĕр çын та сасă паман.

Çакăн пек пĕр кăмăллăн сасăласа, Монголи Халăх Республикин ирĕклĕ граждансем хăйсен тăван çĕршывĕн никама пăхăнмалăхне çирĕп пăхса усрасшăн пулнине пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕç. Çав ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăха вĕсем тăшмансене хирĕç пынă йывăр кĕрешÿре çапăçса илнĕ. Монголи халăхĕ çак çав тери паха политикăллă кампанире хăйĕн тăван çĕршывне çав тери вăйлă юратнине палăртрĕ, хăй политика тĕлĕшпе ÿссе çитнине кăтартрĕ, хăйĕн правительстви тавра, Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ тавра тата Монголи халăхĕн çулпуçĕ Чойбалсан маршал тавра пĕтĕççе тăнине кăтартрĕ.

Çавăн пекех тата плебисцит пирĕн парти аппарачĕпе государство аппарачĕшĕн тата пĕтĕм республикăри общественноçшăн çирĕп тĕрĕслÿ пулса тăчĕ. Халĕ эпир çакна калама пултаратпăр: çав тĕрĕслÿ Монголи Халăх Республикин пултарулăхне лайăх кăтартса пачĕ.

Плебисцит иртерес тĕлĕшпе хуласенче тата уйрăм аймаксенче ĕçлекен комиссисем пур çĕрте те лайăх ĕçленĕ, демократи принципĕсене çирĕп тытса пынă. Паянтан пуçласа Монголи Халăх Республики тĕнчери малта пыракан никама пăхăнмасăр тăракан государствăсен шутĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăрĕ».

ФРАНЦИРИ ПĔТĔМĔШЛЕ СУЙЛАВПА РЕФЕРЕНДУМĂН МАЛТАНХИ ИТОГĔСЕМ

ПАРИЖ, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Шалти ĕçсен министерстви тĕрĕслесе тухна официальнăй даннăйсем тăрăх, Франци метрополийĕн территорийĕнче пулса иртнĕ пĕтĕмĕшле суйлав результачĕсем çакăн пек:

Коммунистсен партийĕ 142 вырăн илнĕ, унсăр пуçне, коммунистсен партийĕн списокĕсем тăрăх Франци çĕнĕрен чĕртсе ярассишĕн кĕрешекен пĕрлешÿллĕ юхăмран 6 депутат суйланă;

«Халăх республики юхăмĕ» ятлă парти 140 вырăн илнĕ;

Социалистсен партийĕ—133 вырăн;

«Демократсен республика союзĕ»—26 вырăн;

Радикалсемпе радикал-социалистсен партийĕ—19 вырăн;

«Республика союзĕ» (чи сылтăмри партисен союзĕ)—12 вырăн;

Социалистсен партине çывăх тăракан «демократсемпе социалистсен тăшмана хирĕç кĕрешнĕ союзĕ»—10 вырăн;

«Альянс демократик»—10 вырăн;

Ытти 9 парти—24 вырăн йышăннă.

Франции тинĕссем урлă выртакан çĕрĕсенче 64 депутат суйламалла пулнă. Вĕсем çинчен калакан даннăйсене илеймен-ха.

ПАРИЖ, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 22-мĕшĕнче кăнтăрла Парижри радио çапла пĕлтернĕ: Францин 39 департаментĕнчи референдумăн малтанхи результачĕсем çакăн пек курăнса тăраççĕ:

Референдумăн малтанхи ыйтăвне хирĕç 9.600.251 суйлавçă «çапла» тесе ответ панă, 378.129 суйлавçă «çук» тесе ответ панă. Çапла ĕнтĕ, çав даннăйсем тăрăх, суйлавçăсем октябрĕн 12-мĕшĕнче суйланă ассамблея учредительнăй пуху пултăр тесе сасăланă.

Референдумăн иккĕмĕш ыйтăвне хирĕç 6.271.497 суйлавçă «çапла» тесе ответленĕ, 3.097.344 суйлавçă «çук» тесе сасăланă. Çапла вара, референдумăн иккĕмĕш ыйтăвне хирĕç панă сасăсем çакна кăтартаççĕ: суйлавçăсен чи пысăк пайĕ государство влаçĕн вăхăтлăх организацийĕ пирки правительство тăратнă закон проектне ырланă. Çав государство влаçĕ Франципе çĕнĕ Конституци вăй иличчен ĕçлесе тăмалла.

ВЕНГРИ ХĔРАРĂМĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ К. Е. ВОРОШИЛОВ МАРШАЛ ПАТНЕ ПЫРСА КАЙНĂ

БУДАПЕШТ, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Венгрири Контроль комиссийĕн председателĕ Совет Союзĕн Маршалĕ К. Е. Ворошилов патне Венгри хĕрарăмĕсен делегацийĕ пынă. Делегаци Совет правительствине тата К. Е. Ворошилов Маршала хăйне те тыткăна лекнĕ Венгри çыннисене хăйсен тăван çĕршывне янăшăн тав тунă.

Йышăнура Совет Союзĕн Венгрири посланникĕ Г. М. Пушкин пулнă.

Делегаци Демократиллĕ хĕрарăмсен союзĕ ячĕпе (çав союзра 200 пин хĕрарăм тăрах тăрать) К. Е. Ворошилов Маршала иккĕ илемлĕ альбом панă: пĕр альбомне И. В. Сталин Генералиссимуса пама, тепĕр альбомне К. Е. Ворошилов Маршала хăйне. Альбомсем çинче çапла çырнă: «Венгрири ача амăшĕсен, ачасен тата арăмсен ячĕпе Совет Союзне тата унăн аслă çулпуçне Сталин Генералиссимуса тыткăна лекнĕ Венгри çыннисене ирĕке кăларнăшăн чунтан ырă сунса тав тăватпăр».

ГИТЛЕРЛА ПАРТИН ЦЕНТРТИ РУКОВОДСТВИН КАРТОТЕКИНЕ ТУПНĂ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Берлинран пĕлтернĕ тăрăх, Америка влаçĕсем Берлинра гитлерла партин центрти руководствин картотекине тупнă. Çав картотекăра 9 миллион гитлеровецăн хушамачĕпе сăнÿкерчĕкĕсем пур. Çавăн пекех тата картотекăра «ют çĕршывсенчи нимĕçсен»—США-ри, Аргентинăри тата ытти çĕршывсенчи гитлерла агентсен хушамачĕсем те пур.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН НОРВЕГИРИ ВĂРТТĂН ЕÇĔСЕМ

ОСЛО, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Норвегири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Ставангер хулинчи полици начальникĕ Норвегире вăрттăн хаçат тухни çинчен каласа панă. Хаçатăн содержанийĕ тăрăх илсе пăхсан, ăна гитлеровецсем кăлараççĕ пуль, тесе шутламалла.

Полици начальникĕн сăмахĕ тăрăх, хаçатра преступникла шухăшсем çинчен çыраççĕ. Хаçат государство руководстви çинчен тата общество деятелĕсем çинчен элек сарать.

ЧЕХОСЛОВАКИ АЛЛИНЕ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ ПАМА ЙЫШĂННĂ

ПРАГА, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Прага хулинчи радио çапла пĕлтерет: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви Америкăн Германири оккупаци çарĕсен командованийĕ Тисо сутăнчăка тата Словакин пуканелле «правительстви» членĕсене Чехословаки правительствин аллине пама хушнă.

Укерчĕк çинче: Берлин хулинче кĕнĕ çĕрте Франкфуртер-Аллейăра туса лартнă Çĕнтерÿ хапхи.

Е. ХАЛДЕЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

СОЮЗНИКСЕН ГЕРМАНИРИ КОНТРОЛЬ СОВЕЧĔН 9-мĕш ЛАРĂВĔ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

БЕРЛИН, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 20-мĕшĕнче Берлинра Союзниксен Контроль Совечĕн 9-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Кениг генерал председатель пулнă. Унта Совет Союзĕнчен—Жуков Маршал, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен—арми генералĕ Эйзенхауэр тата Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешнĕ Королевствинчен—Робертсон генерал пулнă.

Контроль Совечĕ ĕçлекен нимĕçсен ĕç укçинчен илекен налога тата предприятисемпе корпорацисен тупăшĕнчен илекен налога ÿстересси çинчен калакан закона пăхса тухнă.

Нимĕç халăхне суд реформин тĕп принципĕсем çинчен пĕлтерсе çырнине алă пуснă. Çав закона пĕлтерĕве октябрĕн 22-мĕшĕнче пичетлесе кăлараççĕ.

СОЮЗНИКСЕН БЕРЛИНРИ КОМЕНДАТУРИН 15-МĔШ ЛАРĂВĔ

БЕРЛИН, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 18-мĕшĕнче союзниксен Берлинри комендатурин 15-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Франци коменданчĕ бригада генералĕ де Бошен председатель пулса ертсе пынă.

Горбатов генерал-полковника урăх ĕçе куçарнă пирки Совет Союзĕ енчен Берлин хулин коменданчĕ пулма Смирнов генерал-лейтенанта лартнă. Вăл унччен Горбатов генерал-полковникăн заместителĕ пулса ĕçленĕ, союзниксен Берлин хули комендатурин ларăвĕсенче сÿтсе-явнă ыйтусене татса парас ĕçе активлăн хутшăнса пынă.

Союзниксен коменданчĕсен ларăвĕ пуçланас умĕн Горбатов генерал-полковник хăйĕн юлташĕсемпе сывпуллашнă, вĕсенчен уйăрălса кайнă май вĕсене сăмах каланă.

Ларура Берлинри «Цейхгауз» ятлă çар музейне пĕтерсе лартма йышăннă, мĕншĕн тесен вăл нимĕçсен милитаризмне кăтартса тăнă, хурах пусса çаратса пухнă çар трофейисен коллекцийĕ пулнă.

Комендантсем Мăн Берлина апат-çимĕç тăратас тĕлĕшпе кирлĕ паха решенисем йышăннă.

Союзниксен коменданчĕсем магистрат склачĕсене куллен парса тăнисĕр пуçне тата 15 куна çитмелĕх запас тума кирлĕ чухлĕ апат-çимĕç параççĕ, ку запас вара нихăçан та чакмалла мар.

Çĕрулми запасне Мăн Берлин халăхне 1946 çулхи апрелĕн 6-мĕшĕччен парса тăма кирлĕ чухлĕ хатĕрлеме йышăннă.

СОЮЗНИКСЕН АВСТРИРИ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔ

ВЕНА, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 20-мĕшĕнче Союзниксен Австрири совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ.

Хăйсен правительствисем панă инструкцисем тăрăх, Союзниксен совечĕ çапла пĕлтернĕ: провинцисен представителĕсен конференцийĕ хыççăн пысăклатнă вăхăтлăх правительствăн влаçĕ, Союзниксен совечĕ ертсе асăрхаса пынипе, пĕтĕм Австрие сарăлать. Австрин вăхăтлăх правительствин тĕп задачисенчен пĕри — ирĕклĕ суйлав туса ирттересси пулать, çав суйлава май килнĕ таран хăвăртрах туса ирттермелле, темле пулсан та ăна 1945-мĕш çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен кая юлмасăр ирттермелле.

Союзниксен совечĕ хăйĕн ларăвне Реннер доктора пыма чĕннĕ, вара ăна Союзниксен совечĕ çапла йышăнни çинче пĕлтернĕ. Реннер доктор, çакна пĕлсен, Союзниксен советне ăшшăн тав тунă.

Союзниксен совечĕ çавăн пекех тата ытти ыйтусене те пăхса тухнă.

ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН АПАТ-ÇИМĔÇ ТАТА ЯЛХУÇАЛĂХ ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ УÇĂЛНĂ

ОТТАВА, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Канадăн пресс агентствин корреспонденчĕ Квебекран пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 16-мĕшĕнче унта Пĕрлешнĕ нацисен апат-çимĕç тата ялхуçалăх тĕлĕшпе ĕçлекен конференцийĕ уçăлнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Фельетон

Илейкинпа Парнейкин

Илейкин тесен, темĕнле питĕ тĕлĕнмелле çын çинчен каласа парать, тейĕ вулакан. Çу-ук! Кунта ытлашши тĕлĕнмелли нимĕнех те çук.

Илейкина районра пурте пĕлеççĕ. Вăл районри ертсе пыракан çынсенчен пĕри пулнă.

— Ниччовоскер,—тетчĕç ун çинчен кăçалччен.

Анчах... Кăçал Илейкиншăн, тем амакĕ, кĕтмен çĕртенех ăнăççăр япала сиксе тухрĕ. Çавна пула вара унăн авторитетлă вырăнтан та сирпĕнсе тухмалла пулчĕ.

— Инкек... Мĕн тăвас тен, инкек... Инкек куçа курăнса килмест-çке,—тет халь Илейкин.

Ĕç акă мĕнле пулнă.

Пĕррехинче Илейкинăн сысна какайĕ çиесси килсе кайнă. Çав тери юратнă вăл ăна. Çавăнпа та вара Илейкин сысна илме шутланă. Анчах, пасартан илес—хаклă, укçа пĕтет, атă туянмалăх та юлмасть. Мĕн тумалла?

— Чим-ха,—тет Илейкин,—эпĕ хăйхи Парнейкин патне кайса пăхам-ха. Вăл йăваш çын, манран та кăштах хăратчĕ, майлаштарма пулмĕ-ши?

Парнейкинĕ ĕнтĕ, вулакан юлташсем, колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Питĕ итлекен çын вăл..мĕн хушнине тума тăрăшаканскер.

Акă, персе çитет хăйхи пĕр илемлĕ кун уп патне Илейкин. Çитнĕ-çитменех Парнейкина хăтăрма пуçлать.

— Эсир выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе мĕншĕн начар ĕçлетĕр? Плана мĕншĕн тултармастăр? Фермăра сирĕн йĕркелĕх çук! Ыранах пирĕн пата заседание пыратăр! Туянтармалла-ха сире пăртак!..

Çапла çунтарать кăна!

Тĕлĕнсе кайнă Парнейкин ĕнтĕ нимĕн те ăнланаймасть. Илейкин хĕремесленсех кăшкăрнине пула, вăл шиклене укет.

— Эпир... мĕн... Илейкин юлташ... Мĕн эсир?.. Пирĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли план тулнă вĕт... Ытлашшипех... 125 процент. Фермăра та йĕркеллех,—тет вăл, чĕтресе.

— Сыснасем мĕнле?

— Планпа 87 пулмалла, пирĕн 160 пур. Халĕ ытлашшине колхозниксене сутас тетпĕр. Аш-какай çитес çулшăн та парса татнă.

Илейкин халĕ сасартăках çемçелет. Вăл кăлин-кăлин пăхкаласа илет те, правленири çынсене пурне те кăларса яма хушать. Çапла вара Илейкинпа Парнейкин иккĕшех ларса юлаççĕ.

— Акă мĕн,—тет Илейкин,—ан хăра. Эп ăна ахаль... Ахаль ятлаçрăм. Сăнамалăх... Эсир сыснасем сутлăх пур терĕр-и?

— Пур.

— Ман валли пулмĕ-ши унта? Сăмартараххп.

— Илес тетĕр пулсан... Тархасшăн...

— Эпĕ укçине кайран тÿлĕп.

— Э-эй, мĕн унта... Çав пĕр сыснашăн-и? Сирĕнтен укçа пăсе ларма мĕн, вилнĕ тесе акт çыратпăр та—ĕçĕ пĕтнĕ!

— Апла та юрать. Анчах ăна никам та ан пĕлтĕр.

— Упшăн хăрамалли çук, хамăрăнне хамăр пĕлетпĕр. Çынсене мĕн ĕç пур унта.

Çапла вара Илейкин сысна илет.

— Района пырсан... Кĕрсе тух ман пата Хăнана,—тесе хăварать вăл Парнейкина.

Пĕрнинче хăй Парнейкин чăнах та ун патне хăнана кĕрсе тухать. Акă пуçланса каять вара туслăшу! Пырса та ан калаç! Çынсем умĕнче Илейкин Парнейкина ятланçи тăвать, пĕрле чухне кĕçех «кум» е «вăртах» теейместь. Шанчăклă туссем!

Пурăна-киле Илейкинăн арăмне тем ăс килсе кĕрет.

— Илсе пар мана пальто!—тесе йăлăнма тапратать вăл.—Ку, халь тăхăнса çÿрекенни, килĕшмест мана. Çынсен арăмĕсем епле ыттăн та кĕмĕл пек çÿреççĕ. Сан пур... Унăшка та тесе килмест сана!

Арăмĕ пĕрмаях йăлăнса ыйтнипе Илейкинăн хăлхисем тулса çитеççĕ.

— Мĕнле лăпланатарас кăна?—тет вăл.—Чăнах та, илсе парас мар-ши ăна çĕнĕ пальто? Çынсем те: «Кам арăмĕ? Çавăн арăмĕ», тейĕç. Хама та ыр ят. Анчах, укçине ăçтан тупам-ши?

Шутлать-шутлать те хăйхи Илейкин каллех Парнейкин патне вĕçтерсе çитет.

— Итле-ха, тусăм,—тет ăна,—пулăшха мана, пĕр виç-тăватă пин тенкĕ укçа тупса пар-ха? Кайран тÿлемелле. Питĕ кирлĕ.

— Ма парас мар, парас. Колхозра укçа çук-и мĕн? Хамăн мар вĕт. Пожалăста,—тет Парнейкин.

Акă, хайхи пулчĕ те. Мĕн пек илемлĕ туслăх? Ма «тусăм» тесе чĕнес мар?.. Парнейкин хăйĕн тусне, Илейкина, тенринче ыйтмасăрах шăратнăр çупа пыл пырса парать. Колхозăн темĕн те пур вĕт!

— Ку, сана парне... Тепĕр праçникре татах парăпăр,—тет.

Анчах... Пурнăç урапи пĕр йĕрпех чупмасть çав.

Пĕр каçхине Илейкин патне Парнейкин ертсе пыракан колхоза янă уполномоченнăйран васкавлă хут персе çитет:

— «Çалтăр» колхозра лару-тăру питех те харушă. Тырă вырас ĕç юлса пырать. Колхозниксем ĕçе тухмаççĕ. Колхоз председателĕ Парнейкин кунĕн-çĕрĕн ÿсĕр çÿрет,—тенĕ çав хутра.

— Как-так?—тĕлĕнсе каять Илейкин.—Нулма пултараймасть.

— Мĕнле пулма пултараймаст?—пырса кĕрет хайхи уполномоченнăй хăй те,—эпĕ хам курнă вĕт.

— Мĕнле хам курнă?—кăшкăрса пăрахать ăна Илейкин.—Эсир начар ĕçлетĕр, çавăнпа вăл! Парнейкин яланах малта пынă.

— Анчах, Илейкин юлташ, халь начар ĕçлет вăл... Итлемест те... Шыраса тупма çук ăна хăшпĕр кун...

Илейкин шухăша каять. Районри колхозсем пурте тенĕ пекех тырă вырса пĕтернĕ, Парнейкинăн çурри те вырман, тырри тăкăнма пуçланă.

— Мĕнле-ха капла?—шухăшлать Илейкин,—ĕççем начар. Хамăн каяс-ши? Мĕнле капла ятлăп эпĕ ăна? А çав, сысна илни çинчен, укçа илни çинчен, ăнсăртран, çынсен умĕнчех персе ярĕ те вăл, пĕтрĕ вĕт пуç!.. Çук, хамăн каяс мар, заместителе ярас...

Заместительне ĕнтĕ Илейкин хытă тăн кĕртсе ярать. Анчах, лешĕ колхоза çитсен, Парнейкин ун çине çавăрăнса та пăхасшăн мар.

— Мĕнле начар ĕçлетпĕр эпир?—тет вăл, ÿсĕр чĕлхипе пакăлтатса,—кам калерĕ? Çынсем вырма та пуçламан-ăшшă халь. Знать не знаю ваших! Марш кунтан! Пшол! Мана Илейкин юлташ хăй пĕлет. Эпир нихçан та начар ĕçлемен! Хамăрăнне хамăр пĕлетпĕр. Илейкин юлташ мана ятламасть, эсир, шĕвĕрсем, ятласшăн. Марш!..

Çапла ĕнтĕ, Парнейкин Илейкинăн заместительне хусах кăларса ярать.

Анчах Парнейкин ĕçĕ юлашкинчен шала каять, çав ĕç шалалла кĕрсе кайнăçемĕн Илейкинăн ĕçĕ тăрă шыв çине тухать.

— Инкек... Мĕн тăвас тен, инкек... Инкек куçа курăнса килмест çав,—тет халь Илейкин антăраса.

Степан **АСЛАН.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебокс ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26 пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн—3-97 ялхусалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00663 Типография № 1 Управл. полиграф. промышленности при СНК ЧАССР, Заказ № . ф. 6. 50 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз